26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
29
ЮННУН
194(6431) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Кубаньре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, ТЕМРЮК хулине тытса илнĕ.

ДНЕПРОПЕТРОВСК енче пирĕн çарсем, малалла тапăнса пырса, ДНЕПР шывĕн сулахай хĕрринче ДНЕПРОПЕТРОВСК хулине юнашар ларакан НИЖНЕДНЕПРОВСК хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата НОВЫЙ ОРЛИК, СТАРЫЙ ОРЛИК, КАРПЕНКИ, ШУЛЬГОВКА, ПАНЬКОВКА, КУРИЛОВКА, НИКОЛАЕВКА, КИРОВСКИЙ, ФРУНЗЕНСКИЙ, ПОДГОРОДНОЕ, [illegible], КРАСНОАРМЕЙСКИЙ, ОГРЕНЬ, ЧАПЛИ, ЛЮБИМОВКА, ВАСИЛЬЕВКА, ЯСЕНОВАТЫЙ, УЛЬЯНОВКА ятлă тата ытти пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

КРЕМЕНЧУГ енче пирĕн çарсем, наступлени туса пынă, Полтава облаçĕнчи КОЗЕЛЬЩИНА ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ЛАЩЕВКА, ДЕМЬЯНОВКА, ЛИПОВОЕ, БУРОМКА, ЛЫСОВКА, ПУЗИКОВО, ФРУНЗОВКА, МАНЖЕЛИЯ, КНИШЕВКА, ВАСИЛИВКА, КРИВАЯ РУДА, ПРИШИБ, КОЛЕБЕРДА, СОЛОШИНО, ПЕРЕВОЛОЧНАЯ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Полтава облаçĕнчи ЧЕРНОБАЙ тата ИРКЛЕЕВ ятлă район центрĕсене тытса илнĕ.

ГОМЕЛЬ енче пирĕн çарсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, 12 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 230 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Гомель облаçĕнчи ТЕРЕХОВКА ятлă район центрне, чугун çул станцине тата ДОБРЯНКА, ЛЮБЕЧЬ ятлă район центрĕсене тата БЕЛЫНКОВИЧИ, БАРОНЬКА, МОШЕВОЕ, ВИШЕНКИ, СТРУГОВСКАЯ БУДА, ГОРДЕЕВКА, ПЕРЕТИН, КОЖАНЫ, ВЕРЕЩАКИ, СТАРЫЙ ВЫШКОВ, ОЧЕСА-РУДНЯ, КРУПЕЦ, ЖГУНЫ, НОСОВИЧИ, ГОРДУНЫ, МАКОВЬЕ, МАРКОВИЧИ, ГРАБОВО, РАДУЛЬ, МЫСЫ, РЕДЬКОВКА, КУБИЧИ, ДЫМАРКА, НЕДАНЧИЧИ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

МОГИЛЕВ енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, Смоленск облаçĕнчи ХИСЛАВИЧИ, ШУМЯЧИ ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 350 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра СУСЛОВИЧИ, ДОСУГОВО, БОССИАНЫ, ГЛОБКОВО, ЗАСТУПОВО, ШЕВЕРДИНО, ЗАЛЬКОВО, СЛОБОДА, ДЕРБИНО, МИХАЙЛОВКА, ГОГОЛЕВКА, ЗАМОШЬЕ, АЛЕКСАНДРОВКА, СТАРАЯ БУДА, ЗАХАРЬИНО, ПЕРВОМАЙСКИЙ, ПЕТРОВИЧИ, КОСАЧЕВКА, ЗАГУСТИНО, МИКУЛИЧИ, ПАЛИНЦАЯ, САВКА, ПИСЛЯТИН, ХАТИМЧА, МАЛАЯ МУХОВКА тата БОЛЬШАЯ МУХОВКА ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 15 километр малалла куçса, халăх пурăнакан 290 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра СИЛУЯНОВО, ФОЩЕВО, СЕЛЬЦО, ЯСЕНОВИКИ, ЛОЙНА, СТЕПАНЦЫ, ВОЛКОВАЯ, ЖЕЛУДЫ, ТИШИНО, АРХИПОВКА, МИХАЙЛОВКА, ВОЛКОВО, РЖАВКА, БУЯНОВО, ХРАПОВО ятлă пысăк пунктсене тата ГНЕЗДОВО, КАТЫНЬ, КУПРИНО ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 59 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăпманăн 51 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Кубаньре пирĕн çарсем Курчанская районĕнчи рубежран хĕссе кăларнă тăшман Темрюк хули çывăхĕнчи высотасем çинче чарăнса тăма хăтланнă. Темрюкран хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тинĕс десанчĕ антарнă та нимĕçсен каялла чакмалли çулĕсене татса хунă. Çавăнпа пĕрлех пĕр чаçри боецсем Курчански лиман урлă каçнă та, нимĕçсенчен хăюллăн иртсе кайса, вĕсен группировкине флангран пырса çапнă. Шурлăхлă вырăнсенчен çав тери хăвăрт пырса çапни тăшман оборонине йĕркерен кăларнă. Совет боецĕсем нимĕçсем тăракан вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă та хаярран çапăçнă хыççăн Темрюк хулипе портне тытса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. 400 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем, малалла куçса пырса, тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 30 тупăпа миномет, 160 пулемет, 400 автомат, 6 радиостанци тата боеприпассен 6 складне тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци нимĕç çарĕсене татти-сыпписĕр штурмланă, темиçе танк тата 100 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă, гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Днепропетровск енче пирĕн çарсем Днепр шывĕн сулахай енче Днепропетровск хулипе юнашар ларакан Нижнеднепровск хулине тытса илнĕ. Тăшман Нижнеднепровск станцине питех те вăйлăн хӳтĕленĕ, темиçе хут та контратака тунă. Пĕр соединени боецĕсем паян урамсенче хаярран çапăçнă хыççăн, темиçе хутчен те штыкпа вĕççĕн тăрса çапăçса, Нижнеднепровска нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатнă. Хĕçпăшал тата çар материалĕсем нумай тыртса илнĕ, вĕсене нимĕçсем Днепр шывĕ урлă каçарса кайма ĕлкĕреймен. Тепĕр участокра тăшман, хăйĕн мотопехотине танкĕсем тата нумай самолечĕ пулăшса тăнипе, контратака пуçласа янă. Каç пулса килнĕ тĕле пирĕн боецсем хаярран çапăçнă хыççăн гитлеровецсене каялла хăваласа янă. Совет чаçĕсем тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 37 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен «Фердинанд» йышши икĕ тупине çунтарса янă е пĕтерсе тăкнă.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 21 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Кременчуг енче пирĕн çарсем, малалла ăнăçлăн куçса пырса, халăх пурăнакан 200 пункта ытла тытса илнĕ. Совет çарĕсем тăшмана, татти-сыпписĕр пыра-пыра çапса, Днепр патнелле хăваласа пыраççĕ. Кун каçиччен гитлеровецсене икĕ батальонран кая мар пĕтерсе тăкнă. Артиллерин 2 батарейине, боеприпассен обозне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Уйрăм участоксенче пирĕн чаçсем Днепр хĕррине тухнă та унăн сулахай хĕрринче нимĕçсен пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă ушкăнĕсене пĕтере-пĕтере пынă е тыткăна илнĕ.

* * *

Гомель енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, малалла ăнăçлăн куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсене Гомель облаçĕнчи Тереховка ятлă район центрĕнчен хĕссе кăларнă, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене пин çынна çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 11 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 16 тупă, боеприпассен 2 складне, продовольствин 2 складне тата выльăхсен пысăк кĕтĕвне тытса илнĕ. 150 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Могилев енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, нимĕç захватчикĕсенчен халăх пурăнакан 350 пункта ытла ирĕке кăларнă. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем пысăк çухатусем тӳсеççĕ, хăйсен хĕçпăшалĕсене, боеприпасĕсене тата çар материалĕсене пăраха-пăраха хăвараççĕ. Кун каçиччен çапăçусенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Чылай гитлеровеца тыткăна илнĕ. Пирĕн чаçсем 32 танкетка, 6 бронемашина, 25 тупă, 28 трактор-тягач, 240 автомашина, 25 паровоз, 40 платформа, 100 вагонпа цистерна ытла, 5 склад тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Пирĕн чаçсем, çав тери хăвăрттăн малалла куçса пырса, нимĕçсене пирĕн мирлĕ граждăнсене Германие хăваласа кайма памаççĕ. Пĕр районра пирĕн боецсем совет граждăнĕсен темиçе пысăк ушкăнне, пĕтĕмĕшпе шутласан 25 пин çын таран, ирĕке кăларнă, вĕсене нимĕçсем Германи каторгине хăваласа пынă.

* * *

Витебск енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Малалла куçса, халăх пурăнакан 290 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем 700 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, 15 тупă, 40 пулемет, боеприпассен 2 складне тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕ тытса илнĕ. Смоленскран хĕвеланăçнерехре тăшман майлă рубежсемпе—шывсемпе, çыр-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Еççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, уборка вăхăтĕнче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн, государствăна тырă памалли плана тултарнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

9. Куславкка районĕнчи **16-мĕш партсъезд** ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ **Худяков** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Иванова** юлташ). Колхоз тырăсене кĕске срокра пухса кĕртнĕ, авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă.

10. Куславкка районĕнчи **«Правда» колхоз** (колхоз председателĕ **Тимофеев** юлташ, кандидатсен группин руководителĕ **Васильева** юлташ). Колхоз тырăсене кĕске срокра пухса кĕртнĕ, авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне çĕр процентпех тултарнă, кĕрхи çĕртме тумалли плана сентябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех пурнăçланă.

11. Куславкка районĕнчи **«Красная заря» колхоз** (колхоз председателĕ **Федоров** юлташ). Колхоз тырăсене кĕске срокра пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли обязательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçланă.

12. Куславкка районĕнчи **«Искра» колхоз** (колхоз председателĕ **Сомеев** юлташ). Колхоз тырăсене кĕске срокра пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли обязательствăсене пĕтĕмĕшпех парса татнă.

13. Йĕпреç районĕнчи **«Тымар» колхоз** (колхоз председателĕ **М. Ф. Филиппов** юлташ). Çак колхоз тĕштырăсене кĕске срокра тата пĕр çухатусăр пухса кĕртнĕ. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана тултарнă.

14. Йĕпреç районĕнчи **«Коммунар» колхоз** (колхоз председателĕ **М. М. Михайлов** юлташ). Колхоз 227 гектар тĕштырра кĕске срокра (12 ĕç кунĕнче) пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă.

15. Шăмăршă районĕнчи **«Заря» колхоз** (колхоз председателĕ **Т. В. Тимофеев** юлташ). Ку колхоз 341 гектар тĕштырра 19 ĕç кунĕнче пухса кĕртнĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене вăхăтра акса хăварнă. Государствăна тырă памалли плана çĕр процентпех тултарнă. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртнĕ тата государствăна тырă парса татнă.

16. Шăмăршă районĕнчи **«Канаш» колхоз** (колхоз председателĕ **Я. М. Викторов** юлташ). Колхоз 109 гектар тырра 17 ĕç кунĕнче пухса кĕртнĕ, кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене вăхăтра акса хăварнă. Государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнă. Çĕрулми кăларса пĕтерсе, государствăна парса татнă. Кĕрхи çĕртме тумалли плана çĕр процентпех пурнăçа кĕртнĕ.

17. Комсомольски районри **«Ударник» колхоз** (колхоз председателĕ **С. Гильманов** юлташ). Колхоз тырăсене кĕске срокра тата пĕр çухатусăр пухса кĕртнĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсем акмалли плана çĕр процентпех пурнăçланă. Государствăна тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă.

Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. Орлов юлташ Шупашкарта

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче Шупашкара кĕске вăхăтлăха Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. Орлов юлташ килчĕ. Тепĕр кунне вăл Советски района тăван ялне тухса кайрĕ. Унта колхоз ĕçĕпе интересленчĕ, колхозниксемпе тата тăван-пĕлĕшĕсемпе курнăçса каларĕ.

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче Ф. Н. Орлов юлташ Элĕкре, хăй ача чухне вĕреннĕ вăтам шкулта пулса, вĕренекен ачасемпе курнăçса каларĕ.

Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли III-мĕш кварталти плана тултарнă

Йĕпреç леспромхозĕн коллективĕ, кăçал июль уйăхĕн пуçламăшĕнче Мускаври Киров ячĕпе тăракан завод коллективĕ чĕнсе каланине сӳтсе-явса, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕ. Ăмăртăва хутшăнса, вăл вăрман хатĕрлевĕн çулталăкри планне Конституци кунĕ тĕлне тата чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес плана уйăхран уйăха тултарса пыма пулчĕ.

Леспромхоз коллективĕ çав обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана хатĕрлес енĕпе 101,8 процент, турттарас енĕпе 100,8 процент тултарнă.

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрленĕ çĕрте Йĕпреç тата Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксем лайăх ĕçлерĕç. Республикăри пур районсен руководителĕсем те Йĕпреçпе Çĕрпӳ районĕсен руководителĕсем пек ĕçленĕ пулсан, чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана вăхăтра тултарма пултарнă.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар пысăк çĕнтерӳсем тунă çине леспромхозри рабочисем çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе ответлеççĕ. А. Чантурин юлташ кашни кун икĕ норма тултарма сăмах панă. Вăл халĕ кунсерен 2,5 кубометр вутă хатĕрлес вырăнне 6,2 кубометр хатĕрлет. Виççĕмĕш кварталта Чантурин юлташ 195 кубометр вырăнне 497 кубометр, çавăн пекех Зайцев юлташ 307 кубометр, Евграфов юлташ 265 кубометр, Васильев юлташ 304 кубометр хатĕрленĕ. Вăрман турттарнă çĕрте ĕçлекенсем И. Максимов юлташ 216 кубометр турттарнă.

Халĕ леспромхоз коллективĕ кĕркуннепе хĕллехи вăрман хатĕрлев тапхăрне лайăх хатĕрленессишĕн, çулталăкри плана Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлет.

Н. БЕЛЬСКИЙ.

Тăваттăмĕш квартал планне Октябрь уявĕ тĕлне тултарассишĕн

КАНАШ. **(Хамăр корр.).** Вагонсем юсакан заводра социализмлă ăмăрту кунран кун сарăлса пырать. Кунта кашни рабочипе работница Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă. Завод коллективĕ Октябрь уявĕ тĕлне тăваттăмĕш квартал планне тултарассишĕн кĕрешет.

Уяв умĕнхи ăмăртăва организацилес тĕлĕшпе электростанципе механически цех начальникĕсем Петуховпа Лоянич юлташсем тимлĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем кашни уйăх пуçламăшĕнчех рабочисене иртнĕ уйăхри ĕç итогĕсемпе паллаштараççĕ, малашнехи задачăсене ăнлантарса параççĕ. Çавна пула вăл цехсенчи рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Чернов юлташ механически цехра икĕ уйăх ытларах кăна ĕçлет. Вăл пĕр уйăх хушшинчех токарь ĕçне вĕренсе çитрĕ, халĕ нормăна ирттерсе тултарать. Сентябрь уйăхĕнче Чернов юлташ кашни кун икĕ нормăран кая мар тултарса пычĕ.

Заводри ытти цехсенче те Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

В. ВЕСЕЛОВ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăх

14 колхоз авăн çапса пĕтерчĕ

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа районра 14 колхоз авăн çапса тата çĕрулми кăларса пĕтерчĕ. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ф. Зайцев юлташ) сентябрĕн 24-мĕшĕнче уборка ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕ. Вырса пухнă тырра йăлтах çапса пĕтерчĕ, государство умĕнчи пур обязательствăсене те 100 процентпех пурнăçларĕ. Çавăн пекех çĕрулми те кăларса пĕтернĕ, государствăна парса татнă.

Водопьянов колхозра та ялхуçалăх ĕçĕсем кăçал пысăк хăвăртлăхпа пулса пычĕç. Колхоз фронтовой уйăхлăха кĕрсен иккĕмĕш кунĕнче уборка ĕçĕсене йăлтах вĕçлерĕ, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçларĕ. Халĕ Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсемпе ăмăртса ĕçлекен «Чăваш Коммуни» колхоза пулăшма кайрĕç.

И. АНТОНОВ.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Кĕрхи çĕртме тума халĕ те тухман

ТАВАЙ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Фронтовой уйăхлăха хутшăнса районри чылай колхозсем кĕлтесене капана хывас, авăн çапса государствăна тырă парас ĕçсене вăйлатрĕç. «Горьковская Коммуна» колхоз государствăна тырă парса татрĕ, кунта кунне-çĕрне пĕлмесĕр авăн çапаççĕ, çĕрулми кăларса пĕтерчĕç. Выльăх-чĕрлĕхĕн çуртйĕрĕсене юсаса ăшатрĕç. Çĕнĕ Тăрмăшри «Мартăн 8-мĕшĕ» колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Халĕ кунта тимлесех выльăх-чĕрлĕх витисене юсаççĕ.

Чапаев ячĕпе тăракан колхозра кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре кашни бригадăран 4-шар лаша ĕçлет. Суха тăвакансем кулленхи нормăсене пурнăçласа пыраççĕ, кĕрхи çĕртмене вĕсем октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме палăртнă, халĕ 165 гектар сухаланă.

Анчах районра кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хакламан колхозсем те пур-ха. «Светлый путь», «Майăн 1-мĕшĕ», «25-ое Октября» колхозсем кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ, государствăна тырă парса татнă. Анчах кĕрхи çĕртме тума халĕ те тытăнман. Ку колхозсен руководителĕсем кĕрхи çĕртмене МТС пырса сухаласа парасса шанса лараççĕ.

А. КАХОВСКИЙ.

Уйхир ĕçĕсем юлса пыраççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. **(Хамăр корр., телефонпа).** Районри колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас тата çĕрулми кăларас ĕçсем начар пыраççĕ. Сентябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне 21 колхоз кĕрхи çĕртме тума, 16 колхоз çĕрулми кăларма тытăнман. «Пионер», «Красная поляна», «Красноармеец» колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хакламаççĕ. Вĕсем кĕрхи çĕртме çитес çулхи вăйлă тырпулăн никĕсĕ пулса тăнине ăнланмаççĕ пулмалла. Çавăн пекех асăннă колхозсем çĕрулми кăларас ĕçе те манăça хăварнă.

Н. ПЕТРОВА,
В. ДАВЫДОВ.

Кунта хĕле хатĕрленмеççĕ

ШАХАСАН. Кошноруйĕнчи «Прожектор» колхозра выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсама халĕ те тытăнман. Сысна тата сурăхсем хупмалли витесем юрăхсăра тухнă, вĕсене юсас пирки нимĕн те тумаççĕ. Лаша витийĕ те шăтăк-çурăк. Фермăсенче вутă пĕр пуленке те çук. Колхозăн кăçал 30 пăру усрамалăх çĕнĕ вите туса лартмаллаччĕ. Анчах райплан колхоза пĕр кубометр те строиматериал паман. Çавна пулах витене халĕ те туса пĕтереймеççĕ.

Фермăсен заведующийĕ Е. Матвеева выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма кирлĕ пек хатĕрлессишĕн тăрăшмасть, колхоз председателĕ те ку ĕçе хакламасть.

В. ВЕСЕЛОВ,
А. АСЛАН.

Республикăри колхозсенче тырпулсене пухса кĕртес тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсем сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырпулсене капана хывни	Авăн çапни	Çĕрулми кăларни	Кĕрхи çĕртме туни
Улатăр	96,9	65,2	45,3	14,3
Элĕк	95,4	65,0	53,1	14,3
Вăрнар	100	71,4	39,8	19,3
Йĕпреç	100	64,2	42,1	16,2
Ишлей	99,4	70,7	86,1	19,3
Калинино	65,1	52,9	52,2	12,8
Канаш	95,8	57,3	56,0	13,6
Куславкка	98,5	64,5	94,5	20,5
Комсомольски	100	58,2	73,9	22,3
Красноармейск.	99,1	60,5	73,7	26,6
Хĕрлĕ Чутай	90,7	58,1	37,6	15,3
Кувакино	83,2	54,0	16,9	9,1
Сĕнтĕрвăрри	100	61,9	62,5	21,1
Октябрьски	96,2	61,3	46,9	26,6
Первомайски	100	51,0	12,1	10,2
Пăрачкав	90.6	50,2	19,0	11,7
Советски	100	55,2	65,8	7,6
Сĕнтĕр	98,8	65,5	60,1	18,3
Вăрмар	94,3	65,7	52,5	14,1
Çĕрпӳ	96,3	58,9	67,9	18.5
Шупашкар	99,8	74,8	50,1	25,0
Чкаловски	100	51,8	70.9	16,0
Шăмăршă	100	68,7	76,7	15,5
Шăхасан	94,8	56,0	50,0	9.0
Çĕмĕрле	97,5	[illegible]	36,5	11,5
Етĕрне	100	[illegible]	57,0	28,3
Елчĕк	99.3	55,7	73,9	23,3
Тăвай	86,1	45,5	67,6	15,1
Шупашкар хули	100	63,8	66,5	30,0
ЧАССР тăрăх	97.4	60,6	57,0	17,1
Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлнĕ пулнă	91,7	52,2	32,6	11,5

Ялхуçалăх сулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн тăрăшатпăр

Кăçал пирĕн колхоз уйри тырпулсене вăхăтра пухса кĕртнĕ. Çакă вăл колхозниксем ырми-канми ĕçленинчен килчĕ. Пирĕн колхозра халь ĕç кунĕсен минимумне тултарман колхозниксем пĕрре те çук.

Уйри тырпулсене вырнă вăхăтрах эпир авăн çапас тата кĕлте кĕртес ĕçсене те пысăк хăвăртлăхпа туса пытăмăр, каярахпа кĕракине тытăнтăмăр. Çапла вара кĕракине колхоз сентябрĕн 1-мĕшне, кĕлтесене капана хывас ĕçе сентябрĕн 17-мĕшне вĕçлерĕ. Çав вăхăтрах тата кантăр татса, вăрлăхлăх клевера çулса кĕртнĕ.

— Пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар воинĕсем нимĕç фашисчĕсене хирĕç вăя шеллемесĕр паттăррăн çапăçаççĕ, эпир вĕсене колхоз уйхирĕнче стахановла ĕçленипе пулăшатпăр,— теççĕ пирĕн колхозниксем.

Чăнах та кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ вĕсем. Акă вĕсенчен хăшпĕрисем: Марфа Ильина, фронтовик арăмĕ, кăçал 150 ĕçкунне çитерчĕ. Тырă вырнă чухне вăл кашни кун нормăна ирттерсе тултарса пычĕ, каярахпа кĕлте кĕртнĕ çĕрте ĕçлерĕ. Пур ĕçе те вăл вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçлать.

Христиния Дмитриевăна илер. Вăл малтанхи кунсенче тырă вырчĕ, унтан кĕраки турĕ, юлашки вăхăтра уйран кĕлте турттарчĕ тата Вăрнаçти хатĕрлев пунктне тырă турттарчĕ. Вăл та сентябрĕн 1-мĕшчен 152 ĕçкунĕ тунă.

Пирĕн колхоз кăçал государство умĕнчи обязательствăсене срокчен татрĕ. Сăмахран, ап-какай 16,06 центнер вырăнне 16,20 центнер, сĕт 3 389 литр вырăнне 3 889 литр, çăмарта 2415 штука вырăнне 2 487 штука панă. Кусемсĕр пуçне государствăна обязательнăй йĕркепе тата Хĕрлĕ Çар фондне памалли тыра та парса татнă, натуроплата шучĕпе памалли тырра 77 процент панă, юлашкине те çак кунсенчех парса тататпăр.

Халĕ пирĕн Умра авăн çапас тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсене кăларас ĕçсем тăраççĕ. Çав ĕçсене те кĕске вăхăтра туса пĕтерессишĕн пирĕн колхозниксем ырми-канми ĕçлеççĕ. Вĕсем кашниех Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, мĕнпур вăя фронтпа çĕршыва пулăшнă çĕре параççĕ.

Я. ЯКИМОВ.
Элĕк районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Перекет кассисене хывакан укçа хисепĕ ӳссе пырать

Июльпе август уйăхĕсенче Совет Союзĕнчи перекет кассисене çĕнĕрен укçа нумай хывнă. Çав икĕ уйăх хушшинче халăх перекет кассисене 317 миллион та 82 пин тенкĕ укçа хывнă.

Вăрçă вăхăтĕнче халăх уçнă счетсем çинче сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕн пурĕ 1.135.338 пин тенкĕ укçа шутланса тăнă.

Перекет кассисене хывакан укçа хисепĕ пуринчен ытла Мускавра, Свердловскра тата Мускав, Саратов, Куйбышев, Ульяновск облаçĕсенче хăвăрт ӳсет. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

ма-çатрасемпе тата çулпĕ вырăнсемпе усă курса, хаяррăн хирĕç тăнă. Пирĕн çарсем, нимĕçсене хĕвеланăçнелле хăваласа пырса, 15 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан нумай пункта тата темиçе чугун çул станцине тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флотĕнчи летчиксем Балтика тинĕсĕнче тăшманăн 8 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне шыва путарнă.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ сентябрĕн 11-мĕшĕнче нимĕçсем вырăнти халăхран туртса илнĕ тырра Германие турттарса пыракан поезда сирпĕнтерсе янă. Çав вăхăтра крушени пулнă тĕле нимĕç çарĕсене фронталла турттарса пыракан эшелон пырса çитнĕ. Вăл, чарăнаймасăр, унччен анчах сирпĕнтерсе янă вагонсем çине кĕрсе кайнă. Икĕ паровоз, тырă тиенĕ 15 вагон тата 29 классăй вагон пĕтĕмĕшпех çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Нимĕçсем çав çула икĕ талăк хушши тасатса юсанă. Партизансен разведки пĕлсе килнĕ тăрăх, вагонсен ванчăкĕсем айĕнчен гитлеровецсен виллĕ е аманнă салтакĕсене нумай туртса кăларнă.

Пирĕн авиаци Орша, Гомель, Джанкой чугун çул узелĕсене, Рудня, Лиозно, Бобринская станцийĕсене тапăнни

Сентябрĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Орша, Гомель, Джанкой чугун çул узелĕсене, çавăн пекех тата Рудня, Лиозно, Бобринская (Черкассы хулинчен кăнтăрхĕвеланăçнерехре, Днепр шывĕн сылтăм енче) станцийĕсенче пухăнса тăнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тӳрремĕнех пырса тивнипе темиçе чугун çул составĕ сирпĕнсе кайнă. Пушарсем нумай тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Çав çĕрех пирĕн авиаци тăшманăн Днепр шывĕ урлă хывнă каçăсем патне пухăнса тăнă çарĕсемпе техникине пыра-пыра çапнă.

Пирĕн пур самолетсем те хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

Ĕç тухăçлăхĕ ӳсет

ЭЛĔК.- Районри предприятисен коллективĕсем, Хĕрлĕ Çар тăвакан çĕнтерӳсемпе хавхаланса, продукци кăларассине кунран кун ӳстерсе пыраççĕ.

Сӳс-кантăр завочĕ август уйăхĕнче плана 107 процент тултарнă. Халĕ вăл кулленхи плана 110 процент тултарса пырать. Малта пыракан рабочисем Михайлова, Ловкина тата ытти юлташсем юлашки кунсенче ĕç тухăçлăхне 45 процент таран ӳстернĕ.

Райпромкомбинат коллективĕ, сентябрьти плана срокчен пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, планран ирттерсе продукци парать. Унта ĕçлекенсем Л. Михайлов, И. Павлов, М. Кондратьев юлташсем кашниех икĕ çын тумалли ĕçсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Вулав çурчĕпе агитаторсем

ЕТĔРНЕ. „Пионер“ колхозри агитколлективра—11 агитатор. Вĕсене бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Пĕтĕм политикăллă-массăллă ĕçе пĕтĕçтерсе ертсе пыракани—вулав çурчĕ пулса тăрать. Ĕç кунĕ вĕçленсенех агитаторсемпе вулавçăсем кунта пухăнса ĕç итогĕсене пăхса тухаççĕ, ĕçри çитменлĕхсене шута илеççĕ, уйрăм агитаторсен паха опычĕсемпе паллашаççĕ, çитес кунхи ĕçсене палăртаççĕ. Колхозра „Колхозник“ стена хаçачĕ тата боевой листоксем кăлараççĕ.

Çак ĕçсене комсомолец В. Васильев юлташ йĕркелесе пырать. Колхозра халиччен 11 номер стена хаçачĕ тухнă. Хаçат колхозниксен пархатарлă ĕçĕсене çутатса тăрать, колхозри кахалсене, сӳрĕк ĕçлекенсене питлет, бригадăсенче пулакан çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларать, колхозниксене çав çитменлĕхсене пĕтерме мобилизацилет. Колхозниксем хаçата пысăк интереспа вулаççĕ.

Агитаторсем ĕçре радиопа анлăн усă кураççĕ. Ку тĕлĕшпе каллех агитатор-комсомолец Васильев юлташăн паха ĕçне палăртмалла. Радио итлессине кунта çапла йĕркеленĕ. Кашни ирех, Совет Информаци Бюровĕн оперативнăй сводкине радио тăрăх панă вăхăтра, Васильев юлташ телефонпа итлесе сводкăна çырса илет. Унтан ăна пысăк саспаллисемпе çырса, клуб умне ятарласа тунă хăма çине çапать.

Кирек мĕнле ĕçре те агитаторсем хăйсем пример кăтартаççĕ. Çавăнпа агитаторăн сăмахĕ уйрăмах витĕмлĕ те авторитетлă пулать. Комсомолка - агитаторсем Е. Иванова, О. Николаева, Р. Петрова юлташсем уборка вăхăтĕнче яланах ĕç нормине 150—200-шер процент тултарса пынă. Ытти колхозниксем те вĕсенчен юлман. И. Румянцева, А. Григорьев, И. Чернов колхозниксем, хăйсем ваттине пăхмасăрах, кунсерен икшер те виçшер норма тултарса ĕçлеççĕ. Çак икĕ старик, Григорьевпа Чернов колхозниксем, уборка вăхăтĕнче кăна çĕр ĕçкунне яхăн турĕç. Е. Иванова агитатор пулса ĕçлекен бригада мала тухнă. Бригадăра кулленхи ĕç нормине тултарман колхозниксем пĕрре те пулман.

Кашни агитатор большевикла агитацин пур майĕсемпе те усă курма тăрăшать. Е. Иванова, О. Николаева, А. Краснова агитаторсем колхозниксене каннă вăхăтра «Курайманлăх наукй», «Таня» тата ытти литература произведенисене вуласа панă.

Колхозра агитатор пулман вырăн çук. Уйра та, фермăра та, платниксемпе çул юсакансем патĕнче те,—пур çĕрте те пулаççĕ вĕсем. Агитацие массăллă ĕçе куллен туса пынă май, кунта пур ĕçсем те вăхăтра пулса пыраççĕ.

Колхоз фермисенче агитатор пулса Отечественнăй аслă вăрçă инвалидĕ П. Степанов юлташ ĕçлет. Вăл ферма работникĕсене республикăри лайăх ĕçлекен фермăсен, доярккăсен паха опычĕпе паллаштарать, ĕç тухăçлăхне ӳстерме чĕнет. Çапла А. Иванова, М. Иванова, М. Васильева доярккăсем сĕт суса илессине кашни уйăхрах планпа пăхнинчен ӳстерсе пыраççĕ. Вĕсем кăçал 8 уйăх хушшинче планран ирттерсе 7500 литр сĕт суса илнĕ. Халĕ вĕсем çулталăкри плана сентябрь уйăхĕнче тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Ферма выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1943 çулхи плана пур выльăхсем енĕпе те ытлашшипех тултарнă. Кунсăр пуçне А. Ивановăпа М. Иванова доярккăсем Хĕрлĕ Çар фондне 6-шар пăт тырă, 100-шер литр сĕт панă. Колхоз 1943 çулшăн государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăм парса татнă.

Агитколлектива Отечественнăй аслă вăрçăн инвалидĕ орденоносец-коммунист Н. Степанов юлташ ертсе пырать. Вăл агитаторсемпе час-часах канашлусем, семинарсем ирттерет. Кашни агитаторăн тавракурăмне анлăлатассишĕн, вĕсен политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерессишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Вăл хăй кашни кунах бригадăсенче пулать, агитаторсен ĕçне тĕрĕслет, кăтартусем парать.

Н. ЦВЕТКОВ.

Плана ирттерсе тултаратпăр

Пирĕн комбинат коллективĕ кăçал хăйĕн ĕçне чылаях лайăхлатрĕ. Комбинат II-мĕш кварталти плана 133 процент, июль уйăхĕнче—120 процент, август уйăхĕнче—143 процент тултарнă. Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, рабочисемпе работницăсем çĕнĕ çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче халĕ нормăна тултарманнисем питех те сахал. Кашни рабочипе работница тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, куллен çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳ тăвассишĕн кĕрешет. Мария Филиппова производствăна кăçал çеç кĕнĕ. Ăна эпир професси илме ятарласа курсра вĕрентрĕмĕр. Çавăн хыççăн Филиппова юлташ часах хăйĕн нормине ирттерсе тултарма пуçларĕ. Халĕ вăл нормăна куллен 120 процентран кая мар тултарать. Çамрăк рабочи Л. Михайлов та кĕске вăхăтрах специальность илчĕ, нормăна ытлашшипех ирттерсе тултарать. М. Кондратьев, И. Павлов, И. Иванова, В. Кузьмина т. ыт. те кашниех нормăна 150 процент таран тултараççĕ.

Эпир кăçал кадрсем хатĕрлес ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхатпăр. Пĕрремĕш çур çулта кăна тĕрлĕрен курссем урлă вуншар квалификациллĕ рабочисем хатĕрлерĕмĕр. Вĕсем халĕ пурте лайăх ĕçлеççĕ.

Пирĕн комбинат хуçалăхра кирлĕ япаласем (урапа-çунасем, аласем, вĕренсем) туса кăларать, ремонтнăй мастерскойра сехетсем, хут купăссем т. ыт. хуçалăхри япаласене юсаççĕ. Нумаях та пулмасть сĕтел-пукансем юсакан мастерской уçрăмăр. Анчах та вĕсене эпир çителĕклĕ тесе шутламастпăр. Çитес вăхăтра пирĕн çăматă йăвалакан, урапа-çуна юсакан мастерскойсем ĕçлеме тытăнаççĕ. Отходсене сая ярас мар тесе халь анчах тепĕр отделени организацилерĕмĕр, унта атă-пушмак пăтисем хатĕрлеме пуçларăмăр.

Фронтпа çĕршыв пирĕнтен ытларах та ытларах продукци ыйтать, çавна пирĕн тивĕçлĕн пурнăçласа пымалла. Комбинат коллективĕ, кировецсен чĕнĕвне ырласа, кăçалахи çул планне Октябрьти социализмлă Аслă революци 26 çул тултарнă тĕле тултарма обязательство илчĕ.

М. КАМЕНЕВ,
Элĕкри райпромкомбинат управляющийĕ

Комсомол организацийĕсем шкул ачисене пулăшаççĕ

КАЛИНИНО, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). ВЛКСМ райкомĕ (секретарĕ А. Степанова юлташ) фронтовиксен ачисемпе тăлăх ачасене пурне те шкула çӳретессишĕн тимлĕн тăрăшса ĕçлет. Халĕ районри комсомол организацийĕсем шкул ачисем валли ăшă япаласем пухаççĕ. Паянхи куна 60 килограмм çăм, 16 мăшăр нoскипе алшиш, 9 çĕлĕк, 2 картус, 35 метр пир, 2 алшăлли, 5 мăшăр тăла, 14 килограмм ватка, 3,5 килограмм çу, 1626 килограмм тĕштырă, 495 çăмарта, 1654 тенкĕ укçа пухăннă. Ку шутран комсомолăн Шинерти «1-ое мая» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Я. Ирков) 12 килограмм çăм, 5 тир, 3 метр пир, 2 мăшăр алшиш тата портянкăсем пухнă, комсомолăн «Коминтерн» колхозри пуçламĕш организацийĕ 3,6 килограмм çăм, 3 çĕлĕк, 9 метр пир, 175 тенкĕ укçа пухнă.

Анчах та хăшпĕр комсомол организацийĕсем çак ĕçе хакламаççĕ. Комсомолăн «Правда», «Ударник» тата «Путь Ленина» колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем шкул ачисем валли ăшă япаласем пухас ĕçе тытăнман та.

В. ЗАЙЦЕВ.

Производствăра ĕçлекен çамрăксене вĕрентмелли шкулсем

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче туллимар вăтам тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухачченех çĕршер тата пиншер çамрăксем промышленность предприятийĕсене ĕçлеме карĕç. Вĕсем кĕске вăхăт хушшинчех производство техникине алла илсе фронта кайнисен ĕçĕсене пурнăçа кĕртсе пыма тытăнчĕç. Халĕ предприятисенчи çамрăксем фронта ытларах пулăшас туйăмпа ĕçлени çинчен çĕршер примерсем илсе кăтартма пулать. Çав вăхăтрах вĕсем малалла вĕренес шухăш-кăмăла та пăрахмаççĕ.

Совет правительстви кăçал октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа заводсенче ĕçлекен çамрăксем валли уйрăм шкулсем уçасси çинчен постановлени йышăнчĕ. Пирĕн республикăра производствăра ĕçлекен çамрăксем валли пурĕ 10 шкул пулать. Вĕсем Шупашкарта, Улатăрта, Канашра, Çĕмĕрлере, Куславккара, Çĕрпӳре, Етĕрнере тата Вăрмарта пулаççĕ. Вăл шкулсене малтанласа палăртнă тăрăх 1.350 çамрăка явăçтармалла. Хăшпĕр шкулсем предприятисем çумĕнчех уçăлаççĕ.

Халĕ шкулсене вĕренӳ çулне хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ. Шкулсем валли преподавательсем тата шкул директорĕсем пулса ĕçлеме кадрсем тупса çитернĕ.

Производствăра ĕçлекен çамрăксене вĕрентес тĕлĕшпе предприяти руководителĕсем умĕнче пысăк ĕçсем тăраççĕ. Вĕсен вĕренӳ ĕçне лайăх организацилесе пыма шкулсене ĕçлĕ пулăшу памалла. Çамрăксене вĕрентесси çине профсоюзсен фабрикăсемпе заводсенчи комитечĕсен тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Вĕсен халех çамрăксене шкула кĕмелли йĕркесене ăнлантарса памалла, çутĕç органĕсене çуртсем тупас, шкулсенче кирлĕ оборудованисене туянас тата вĕренӳ пуçлансан вĕренекенсем хушшинче дисциплинăна çирĕплетес тĕлĕшпе кулленех пулăшса пымалла. Çавăн пекех вĕренекенсене вĕренме условисем туса парас пулать.

Государствăна брынза параççĕ

ЭЛĔК. («Чăваш Коммуни» корр.). Куракăшри «Безбожник» колхозăн кăçал государствăна 31 килограмм брынза памалла, вăл 38 килограмм пачĕ. Брынза тума кунта халĕ те сурăхсене сăваççĕ. Уйрăм сурăхсем кунне 1 литра яхăн сĕт параççĕ.

Пиçенерти «9 съезд ВЛКСМ» колхоз та брынза памалли обязательствăна ытлашшипех тултарчĕ, вăл 19 килограмм вырăнне 29 килограмм пачĕ. Азаматри Киров ячĕпе тăракан, Малти Хирлепри «Пионер» колхозсем хăйсене панă обязательствăсене 130—140 процент тултарчĕç.

Х. ЛИСИН.

Тĕнчери лару-тăру

Муссолини вырăнтан тухни вĕр уйăх çурă иртсен, Итали парăнчĕ. Сентябрĕн 8-мĕшĕнче союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генерал çапла пĕлтерчĕ: «Итали правительстви хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе пĕрле парăнчĕ. Союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ пулса, эпĕ Пĕрлешӳллĕ Королевство, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ ырланă условисем тăрăх перемирие патăм», терĕ.

Европăри Берлин—Рим текен фашистла тĕнĕл хуçăлчĕ. Германи союзникĕ пулса тăракан Итали стройран тухрĕ. Вăрă-хурахла гитлерла коалицие хытă пырса çапрĕç.

Итали вăл фашистла лагерь йывăр кризис тӳссе ирттернĕ пирки парăнчĕ. Вăрçăпа политика енчен питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан çак событи, пуринчен малтан, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Хĕрлĕ Çар паттăррăн çапăçнипе, унăн çĕнтерĕвĕсемпе сыхăнса тăрать. Совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ паттăррăн кĕрешни пĕтĕм вăрçă ĕçĕсене тепĕр майлă çаврăнса ячĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Гитлерăн вăрçă машинине аркатмаллах пыра-пыра çапнă, халĕ те çапаççĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра июльти наступлени путланса ларнине пула тата Хĕрлĕ Çар паттăррăн та çĕнтерӳллĕн малалла тапăнса пынине пула Англипе Америка çарĕсен Сицилири операцийĕсем Италишĕн хăрушлăх кăларса тăратнă вăхăтра Гитлерăн хăйĕн союзникне пăрахма лекрĕ. Фашистла Итали Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра хăйĕн пĕтĕм вăйне хурса çапăçакан гитлерла Германирен çар енĕпе пулăшу илеймерĕ, илме те пултараймарĕ.

Итали парăнсанах гитлерла пропаганда хăйĕн ĕнерхи союзникне «сутăнчăк» тесе вăрçса, ылханса пĕтерчĕ. Германи Италие хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ, унăн территорийĕнче Италипе союзниксен çарĕсемпе çапăçма пуçларĕ. Германи Çурçĕр Италие тата Рим районне тытса илчĕ. Италин вăтаçĕр районне Бадольо правительстви контроллесе тăрать. Неаполь районĕнче тата Италин кăнтăр пайĕнче Америкăпа Англи çарĕсем çапăçаççĕ. Итальянецсем хĕсся пынине пула, нимĕçсем Италин Сардини утравĕ çинчен тухса кайрĕç.

Парăну условийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, Италин пĕтĕм тинĕс-çар флочĕ союзниксен базисене пычĕ. Итали авиацийĕн пысăк пайĕ Италин е союзниксен аэродромĕсене вĕççе кайрĕ. Итали çарĕсем нумай вырăнсенче нимĕçсемпе çапăçаççĕ.

* * *

Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳллĕн малалла тапăнса пыни тата Итали парăнни гитлерла пĕтĕм коалицие хавшатрĕ. Сталин юлташăн: «Нимĕçсен фашистла лагерĕ питĕ йывăр кризис тӳсет тата пуçĕпех пĕтсе ларасси умĕнче тăрать» тенĕ сăмахĕ тĕрĕсси ытларах та ытларах палăрса пырать. Итали парăнни гитлерла Германие пĕччен тăратса хăварассине вăйлатрĕ, унăн вăрçăпа стратегилле лару-тăрăвне начарлатрĕ. Европăри гитлерла блок пĕтсе ларасси хăвăрт çывăхарса килет. Германи вассалĕсен çĕршывĕсем — Румыния, Венгрия, Финляндия—хăраса ӳкни хытăрах та хытăрах палăрать. Çав çĕршывсен пуçĕнче тăракан çынсем Германия çĕнтерессине шанми пулчĕç, çавăнпа халь хăйсен çĕршывне çав инкекрен хăтармалли майсем шыраççĕ. Халăх хушшинче пур çĕрте те Германие хирĕçле тата поражени тӳсес майлă шухăш-кăмăлсем сарăлаççĕ.

Румынире офицерсемпе чиновниксем хушшинче те пăтрану пуçланчĕ. Румыни офицерĕсен пĕр ушкăнĕ, вăл шутра Румыни çарĕн штаб начальникĕ пулнăскер те, Антонеску маршал патне меморандум янă. Çав документра тӳрех çапла каланă: Румыния çак вăрçа хутшăнни ăна пĕтерсе лартать, тенĕ. Çĕршыв пуçĕнче тăракан бюрократсен ушкăнĕнче те Германия ку вăрçăра аяла пулчĕ тенĕ шухăш сарăлса пырать. Совет Союзĕн оккупациленĕ районĕсенче Румынин нумай чиновникĕсем халех те ĕнтĕ хăйсен вырăнĕсенчен тухатуха тараççĕ. Румынин промышленность тата ялхуçалăх буржуазийĕн вăйлă ушкăнĕсем Антонеску режимне хирĕç пыраççĕ, Румыние вăрçа хутшăнма пăрахтармалли майсем шыраççĕ. Нимĕçсем тата Антонеску лайкки çаратса пĕтернĕ халăх, çак йывăр вăрçăра халсăрланса юлнăскер, вăрçă пĕтессе кĕтет.

Италия парăнни Венгрие те хăратрĕ. Правительство партийĕн конференцийĕнче тухса каланă хăйĕн сăмахĕнче премьер Калаи Венгрия Германи союзникĕ пулса тăни çинчен пĕр сăмах та каламарĕ, анчах та Венгрин тулашĕнчи политикине венгерсене çеç тивĕçлĕ пек сыхласа тăма кирлине вăйлăн палăртрĕ. Будапештри хăшпĕр ушкăнсем çапла пĕлтереççĕ: Италия парăннă хыççăн Венгрин виçĕ çĕршыв тунă пактра кăтартнă обязательствисем пăрахăçа тухаççĕ, теççĕ. Венгрин малашнехине уççăнтарах курса тăракан политикĕсем правительствăн гитлерла политики çĕршыва пĕтерсе лартассине тахçанах ăнланнă.

Çавăн пек ĕнтĕ гитлерла вассалсем хушшинчи лару-тăру, çакăн пек ĕнтĕ Европăри гитлерла блокăн путланса ларас паллисем. Нумай пулмасть «Ньюс кроникл» хаçат çапла çырчĕ: «Вассалсем пĕрин хыççăн тепри вăрçăран тухаççĕ, е вĕсене çапса çĕмĕреççĕ; парăнтарнă мĕнпур çĕршывсенче Германие хирĕç тăрас хастарлăх халиччен пулман пек вăйланса пырать. Гитлерла Германия часах Европăра пĕр пĕччен, союзниксемсĕр, туссемсĕр тăрса юлĕ. Ăна историре халиччен пулман пек курайми пулĕç, çав вăхăтрах ăна çĕмĕрсе тăкассине те нимле майпа та сирсе яма пулмĕ.

Г. ЕГОРОВ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Адриатика тинĕс хĕрринче союзниксен çарĕсем Офанто юханшывĕ урлă каçнă та Черньоал ятлă пункта йышăнса илнĕ.

Центральнăй фронтра Англи çарĕсем Спинаццола, Ателла тата Муро ятлă пунктсене тытса илнĕ. Америкăн пиллĕкмĕш çарĕн чаçĕсем Калабритто тата Кассано пункчĕсене йышăнса илнĕ. Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çар объекчĕсене тата çарĕсене пыра-пыра тапăннă.

Халь паларнă тăрăх, союзниксен Салернона аннă çарĕсем 2.000 çынна тыткăна илнĕ.

Итали королĕ Виктор-Эммануил тата Бадольо маршал Итали правительствин ытти членĕсемпе пĕрле Италин кăнтăр енчи хулисенчен пĕринче вырнаçнă вăхăтлăх столицинче пурăнаççĕ.

КОРСИКА ÇИНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çак юлашки кунсенче утрав çинче нимĕçсен 1.000 салтакĕ ытла виллĕ, темиçе çĕр салтакĕ тыткăна лекнĕ.

Басти районĕнчи чи кирлĕ высотасене пурне те тытса илнĕ хыççăн союзниксем хулана йышăнса илнĕ. Çавăн пекех Олетта тата Ольметто ятлă пунктсене тытса илнĕ. Нимĕçсем пĕтĕм фронт талккăшĕпех каялла чакаççĕ. Халь вĕсем Корсика утравĕн çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи кĕтесси çине кăна тытăнса тăраççĕ. Франци çарĕсем, партизансемпе пĕрле кĕрешсе, нимĕçсене çыран хĕрринелле хĕссе пыраççĕ.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН СОСТАВĔ УЛШĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи кабинечĕн составĕнче çакăн пек улшăнусем тунă: премьер-министрăн заместительне Этлине çав вăхăтрах советăн лорд-председателĕ пулма лартнă. Советăн ку таранччен лорд-председателĕ пулса ĕçленĕ Джон Андерсона финанс министрĕ пулма лартнă, вăл вара çар кабинечĕн членĕ пулса тăрать. Лорд Крэнборна пичет лорд-хранителĕн обязанноçĕсенчен хăтарнă та Доминионсен ĕçĕсен министрĕ вырăнне лартнă. Пичет лорд-хранителĕ пулса ĕçлеме Бивербурк лорда хушнă.

Пĕлтерӳ

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6). Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренекенсене пулăшас шутпа, «Фашистсен лагерĕнчи кризис» ятлă темăпа лекци пулать.

Лекцие ВКП(б) горкомĕн штатра тăман лекторĕ Разбитнов юлташ вулать.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Çамрăксем хушшинче спорт ĕçне анлăн сарса пырар!

Çамрăк ăрăва сывлăх тĕлĕшĕнчен воспитани парасси—хисеплĕ задача пулса тăрать. Совет çамрăкĕ пур тĕлĕшпе те çирĕп те таса сывлăхлă, пысăк пĕлӳлĕхлĕ çын пулса ӳсме тивĕçлĕ. Вăл хăвăрт чупма, шыва лайăх ишме пултартăр, чипер утма пĕлтĕр, ĕçпе оборонăна хатĕр пултăр.

Çамрăк ăрăва сывлăх тĕлĕшĕнчен воспитани парас ĕçе уйрăмăнах çамрăксем хăвăрттăн ӳснĕ тапхăрта, урăхла каласан, вĕсем 12—18 çулсенче чухне лайăх йĕркелемелле. Ку тапхăрта çамрăксем шкулсенче пулаççĕ. Çавăнта ĕнтĕ вĕсене ĕçе хăнăхтармалла, вĕсен сывлăхне çирĕплетмелле тата хăюллă та çирĕп пулма вĕрентмелле. Çамрăксене çавăн пек хăнăхусем парас енĕпе шкулсенче çарпа физкультура ĕçне органиазацилени пысăк пулăшу парать. Анчах çамрăксене воспитани парассине шкулсенче çар ĕçне вĕрентме уйăрса панă вăхăтра кăна ĕçленипе ăнăçлăн туса пыма май килмест, физкультурăна, çар ĕçне ытти майсемпе те сарса пыни кирлĕ.

ССР Союзĕн Совнаркомĕ кăтартса панă тăрăх, шкул ачисен «Смена» ятлă ирĕклĕ спорт обществине тунă. Çак обществăна миллионшар шкул ачисене явăçтармалла. Физкультурăна ачасен кулленхи йăлине кĕртмелле тăвас пулать. Халĕ çав ыйтусем тавра политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пырас пулать, организациллĕ ĕçсене тума тытăнмалла. Районсенче, хуласенче çĕнĕ спорт обществин совечĕсене тумалла. Общество совечĕсене ĕçе лайăх туса пыма пултаракан опытлă та активлă работниксене уйăрса лартас пулать. Обществăсенче ĕçлеме уйăрнă комсомолецсене урăх порученисем памалла мар.

Вĕренӳ çулĕ пуçланнă хыççăн хуласемпе районсенче вĕренекен комсомолецсен актив пухăвĕсене ирттерсе, вĕсенче «Смена» спорт обществине организацилесси тата комсомол умĕнчи задачăсем çинчен сӳтсе явмалла. Вĕренӳ çулĕ пуçлансанах пур туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче те спорт обществин коллективĕсене организацилемелле. Организациллĕ ĕçе тимлĕн туса пырсан вара шкулсенче вĕренӳ пуçланнă кунсенчех спорт кружокĕсен, секцисен, командăсен ĕçне лайăх йĕркелеме май пулать. Пирĕн шкул ачисем гимнастика, çăмăл атлетика, фехтовани ĕçне, штык вĕççĕн вăрçма, йĕлтĕрпе, конькипе çӳреме тата физкультурăн ытти вăййисене тулли кăмăлпа тимлĕн вĕренме тытăнчĕç. Спортăн асăннă вăййисене сарса пыни вĕренекенсен çарпа физкультура ĕçне вĕреннĕ чухне илнĕ пĕлĕвĕсене татах та ӳстерме пулăшать.

Шкулсенчи спорт обществисене, секцисене, командăсене ертсе пыма спорт мастерĕсемпе спортсменсене тата çуллахи вăхăтра лагерьсенче пулнă аслă классенче вĕренекенсене явăçтармалла. Кашни спортсмен, вăл кирек хăш спорт обществинче тăрать пулин те, «Смена» обществинче пĕр-пĕр секцие е командăна ертсе пыма тивĕçлĕ.

Шкулсенчи обществăсене спорт инвентарĕсем çителĕклĕ тупса памалла. Спорт инвентарĕсене тума предприятисенчи, колхозсенчи, учрежденисенчи тата шкулсенчи çамрăксене явăçтармалла. Шкулсем çумĕнче площадкăсем тăвас пулать. Комсомол организацийĕсен кашни хулара, районра «Смена» спорт обществи валли стадион, спорт базине тума пулăшмалла.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тата физкультурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитечĕ йышăннă тăрăх, октябрь уйăхĕнче вĕренекенсен çарпа спорт вăййисен ăмăртăвĕсем пулса иртеççĕ. Вăл çакăн пек йĕркепе пулмалла: малтанах ăмăртусем шкулсенче иртеççĕ, унтан шкулсенче мала тухнă командăсен районсенчи тата хуласенчи ăмăртăвĕсем пулаççĕ, юлашкинчен вара районсемпе хуласенчи ăмăртусенче мала тухнă командăсен облаçри заочнăй ăмăртăвĕ пулать. Çак ăмăртусене лайăх хатĕрленсе ирттерни вĕренекенсем хушшинче спорт ĕçне анлăн сарма, «Смена» обществине пиншер çамрăксене явăçтарма пулăшĕ.

Кашни шкултах «Смена» обществи пулмалла. Учительсемпе шкулсенче çар ĕçне туса пыракан работниксен тата комсомол организацийĕсен хисеплĕ задачи—шкул ачисене хăюллă та чăтăмлă, çирĕп сывлăхлă çынсем туса ӳстересси пулать.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомĕн çар ĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АССР НАРКОМПРОСНЕ главнăй бухгалтер, бухгалтер-ревизор, материалсем тĕлĕшпе ĕçлекен бухгалтер тата статистик кирлĕ. Наркомпроса пăхăнса тăракан учрежденисенче ĕçлеме бухгалтерсем кирлĕ.
Хваттер параççĕ.

ЧĂВАШ АССР НАРКОМПИЩЕПРОМНЕ апатçимĕç промышленноçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен инженер-технолог тата бухгалтер-ревизор кирлĕ.
Адрес: г р. Чебоксары, ул. Урицкого, 15. Наркомпищепром. Тел. 2—11.
2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—3—31, издательство конторин — 0—23.

НТ-1838

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.